2022-2023-мӗш вӗренӳ ҫулӗ
Шкул шайӗнчи олимпиада
Чӑваш чӗлхипе литератури (Чӑваш шкулӗ)
5 класс
Ыйтусем

Олимпиада ирттермелли вӑхӑт – 60 минут
Кашни ыйтӑва тӗрӗс хуравласан чи нумайӣи 50 балл пухма пулать

1.Ҫак йӗркесен авторне тӗрӗс палӑртӑр. Пӗрремӗш клеткӑна автор хушамачӗн малтанхи сас паллине ҫырӑр. *«Халӑхӑн ӑс-тӑнӗпе унӑн пӗтӗм тӗнче курӑмне тӑван чӗлхе чун парать. Тӑван чӗлхесӗр чӑн-чӑн пӗлӳ ҫук».* *Тӗрӗс хуравшӑн – 5 балл.*

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|

2.*Кай, тух, итле* сӑмахсен антонимӗсене тупӑр та вӗсен пӗрремӗш сас паллине иккӗмӗш клеткӑна ҫырса хурӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 5 балл.*

3.*Вырӑс чӗлхинчен кӗнӗ сӑмахсенче ҫеҫ тӗл пулакан уҫӑ сасӑ хӑшӗ пулать?* Сас паллине виҫҫӗмӗш клеткӑна ҫырса хурӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 3 балл.*

4. _______ *пек вӑйли ҫук, ҫил пек усалли ҫук.* Сиксе юлнӑ сӑмаха тӗрӗс тупса палӑртӑр, пӗрремӗш сас паллине тӑваттӑмӗш клеткӑна ҫырса хурӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 5 балл.*

5. *Путенерен ҫу ил тӑманаран тӗк ил.* Панӑ предложенире хӑш сӑмах хыҫҫӑн чарӑну палли лартаҫҫӗ? Сӑмахӑн юлашки сас паллине пиллӗкмӗш клеткӑна ҫырӑр. Вӗҫен кайӑк ячӗсене вырӑсла куҫарӑр. *Сӑмахне тӗрӗс тупнӑшӑн -3 балл, вырӑсла куҫарнӑшӑн- 4 балл. Пӗтӗмпе – 7 балл.*

6. *Чӑваш Республикинче Ядрино ятлӑ район центрӗ пур. Район центрӗн ячӗ чӑвашла мӗнле пулать?* Чӑвашла ячӗн пӗрремӗш сас паллине улттӑмӗш клеткӑна ҫырӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 5 балл.*

7. *К. Ивановӑн «Тимӗр тылӑ» хайлавӗнче Чӗкеҫ кин миҫе юсман пӗҫерет?* Хисеп ятне сӑмахпа ҫырӑр, сӑмахӑн пӗрремӗш сас паллине ҫиччӗмӗш клеткӑна вырнаҫтарӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 5 балл*

8. *Мӗн вӑл хайлаври тема? Тӗрӗс хуравшӑн – 4 балл.*

9. Ҫыравҫӑсен хайлавӗсене тӗрӗс шыраса тупӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 6 балл.*

1.Авторсем: Геннадий Волков, Валерий Туркай, Юрий Скворцов.

2.Хайлав ячӗсем: «Амаҫури анне», «Айӑп», «Ӑслӑ ача».

10. Хӑвӑр тавраҫра ирттерекен паллӑ чӑваш уявӗ ҫинчен ҫырса парӑр. *Тулли хуравшӑн - 5 балл.*